Муркаш район хаçачĕ

# Çĕнтерӳ ялавĕ

1944 çулхи майăн 5-мĕшĕнченпе тухать

23 (7767) №№ ✻ Юн кун, 2010 çулхи мартăн (пуш) 31-мĕшĕ ✻ Хакĕ ирĕклĕ

**Ĕçре пултаруллисем**

## «Вулакансем ытларах пулччăр тесе тăрăшатăп»

*Çапла хуравларĕ хăйĕн ĕçĕ-хĕлĕ пирки ыйтсан Шомик ялĕнчи библиотека библиотекарĕ Марина Валерьевна Филиппова. 1999 çултанпа вăл кунта библиотекарь пулса ĕçлет. Вулавăша пыракансемпе вашаватлă пулнипе, кашнин ыйтăвнех тивĕçтерме тăрăшнипе палăрса тăрать вăл. Кĕнеке илсе тăракансем паянхи куна 300 çынна яхăн шутланаççĕ. Вĕсем хушшинче пенсионерсем те, шкул ачисем те сахал мар.*

*Кунпа пĕрлех библиотекăра тĕрлĕрен выставкăсем йĕркелеççĕ, ытти мероприятисем тăтăшах ирттереççĕ. Вĕсене хутшăнакансем те чылай. Библиотекăри йĕркелĕхпе тирпейлĕх куç умĕнчех.*

*Сăн ӳкерчĕкре: М.В. Филиппова библиотекарь.*



**В. ШАПОШНИКОВ**
**сăн ӳкерчĕкĕ.**

**Республикăра**

## Шанатпăр: никам та айккинче юлмĕ

Умра – пурне те мăнаçлантаракан, савăнтаракан пулăм: Тăваш çĕршывăн Аслă вăрçинче çĕнтернĕренпе 65 çул çитнин сумлă уявĕ. Республикăри вăрçă тата çар хĕсмечĕн ветеранĕсен общество организацийĕ те ăна тĕплĕ хатĕрленет. Унăн пуçарăвĕпе Чăваш Енре Çĕнтерӳ уявĕн фондне йĕркеленĕ. Ырă ĕçĕн пухмачне Чăваш Республикин Президенчĕ Н. Федоров, Министрсен Кабинечĕн Председателĕ С. Гапликов, влаç органĕсенче ĕçлекенсем пĕр уйăхри шалăвне куçарнă. Предприятисемпе организаци ертӳçисем, уйрăм çынсем хăйсен тӳпине хывнă. Фондра пухăннă пĕтĕм укçатенкĕпе Шупашкарта çар парадне ирттерме, Çĕнтерӳ кунĕ ячĕпе мероприятисем йĕркелеме, вăрçă тата тыл ветеранĕсене пулăшу кӳме усă кӳрĕç.

Николай Федоров Президент кăçалтан пуçласа кашни Çĕнтерӳ кунне юбилей пек ирттерме сĕнчĕ. Мĕншĕн тесен çак кун пирĕн çĕршывăн, унта пурăнакан халăхсен паттăрлăхĕпе мухтавĕ.

Вăрçă тата çар хĕсмечĕн ветеранĕсен общество организацийĕ республикăри кашни çынна Çĕнтерӳ уявĕн фондне укçа-тенкĕпе пуянлатма чĕнет. Организацисемпе предприятисем, усламçăсем, уйрăм харпăрлăхлă коллективсем те пархатарлă та сăваплă çак пуçаруран айккинче юлмасса шанать. Вĕсем валли ятарласа фонд реквизичĕсене пĕлтеретпĕр:

Чувашская региональная общественная организация ветеранов войны и военной службы

ИНН 2130007804

КПП 213001001

Р/с № 40703810800000013052 в АКБ «Чувашкредитпромбанк» ОАО БИК 049706725

Кор/счет № 30101810200000000725.

**Вĕрентӳ**

## Тĕн культурисене вĕренеççĕ

Вĕренӳ çулĕн тăваттăмĕш чĕрĕкĕ кăçалхи тăваттăмĕш классемшĕн тепĕр предметпа пуянланчĕ. Ачасем «Тĕн культурисен никĕсĕсене тата чиркӳрен уйрăм обществăн (светская) этикине» алла илĕç. Çак предмета вĕрентме Чăваш Республикин вĕрентӳ институтĕнче районти 28 педагог ятарлă курссенче вĕреннĕ.

Предмета ашшĕ-амăшĕнчен ирĕк ыйтнипе суйласа илнĕ. Çак предмет содержанине тĕнчери тĕн культурисемпе паллаштарасси, православи, мăсăльмансен, йудейсен тата буддистсен тĕнĕсем пирки каласа парасси те кĕрет. Кунсăр пуçне ачасем чиркӳрен уйрăм обществăн этикине те вĕренĕç. Пиллĕкмĕш класра пĕрремĕш чĕрĕкре предметпа малалла паллашĕç.

**Н. НИКОЛАЕВА.**

**Район администрацийĕнче**

## Чи тивĕçлисене – Хисеп грамоти

Районăн экономикăпа социаллă аталанăвне пысăк тӳпе хывнăшăн, обществăлла ĕçре активлă пулнăшăн «Моргаушская» чăх-чĕп фабрики» уçă акционерлă обществăн директорне **Николай Григорьевич ВАНЕРКИНА**, ял хуçалăх производствинче нумай çул хушши тухăçлă ĕçленĕшĕн Суворов яч. хис. ял хуçалăх производство кооперативĕн машинăпа ĕне сăвакан операторĕсене **Надежда Валентиновна МИХАЙЛОВАПА Валентина Николаевна ПЕЧКОВАНА**, «Моргаушское» пурăнмалли çурт-йĕрпе коммуналлă хуçалăх системинче нумай çул хушши ăнăçлă ĕçленĕшĕн **Владимир Алексеевич ХЛАШЕВ** экскаватор машинистне тата **Валерий Геннадьевич ВЕСЕЛОВ** электрогазосварщика, ӳсекен ăрăва вĕрентсе воспитани парас ĕçре ӳсĕмлĕ ĕçленĕшĕн С.М. Михайлов ячĕллĕ «Юнкăри вăтам пĕлӳ паракан шкул» муниципаллă вĕрентӳ учрежденийĕнче вырăс чĕлхипе литератури вĕрентекен **Луиза Евстафьевна АРГАНДЕЕВАНА**, «Мăн Сĕнтĕрти вăтам пĕлӳ паракан шкул» муниципаллă вĕрентӳ учрежденийĕнче пуçламăш классене вĕрентекен **Альбина Андреевна ЕГОРОВАНА**, «Шомикри вăтам пĕлӳ паракан шкул» муниципаллă вĕрентӳ учрежденийĕн директорне **Татьяна Михайловна МАЙОРОВАНА** район администрацийĕн пуçлăхĕн 65-мĕш номерлĕ йышăнăвĕпе февралĕн 11-мĕшĕнче район администрацийĕн Хисеп грамотипе наградăланă.

**Апрелĕн 8-мĕшĕнче – Пĕрлехи йышăну**

## Çурт-йĕрпе коммуналлă хуçалăх сферин ĕçĕ тивĕçтерет-и?

Апрелĕн 8-мĕшĕнче республикăра çурт-йĕрпе коммуналлă хуçалăх ĕçĕ-хĕлĕн право хутшăнăвĕн ыйтăвĕсене татса парассипе Пĕрлехи йышăну кунĕ иртет.

Район çыннисен ыйтăвĕсем çине Раççейри юристсен ассоциацийĕн регионти уйрăмĕн специалисчĕсем, прокуратура сотрудникĕсем, çурт-йĕрпе коммуналлă хуçалăх специалисчĕсем тата ыт. хуравлаççĕ.

Пĕрлехи йышăну кунĕнче кирек кам та хăйне хумхантаракан ыйтупа тивĕçлĕ хурав илме пултарать. Ăна тухса тăнă ыйтăва татса пама та пулăшаççĕ.

Муркаш районĕнче пурăнакансем Раççейри юристсен ассоциацийĕн регионти уйрăмĕн пирĕн районти çак адреспа вырнаçнă консультаци пунктне пыма пултараççĕ: Муркаш ялĕ, Хĕрлĕ лапам, 5 çурт. Тел.: 62-6-36.

Вулакансем хăйсене хумхантаракан ыйтусене редакцие те пĕлтерме пултараççĕ.

**Фермăсенчи хĕл кунĕсем**

## Ырри çине таянса ĕçлесчĕ

***Обществăлла выльăх-чĕрлĕх отраслĕнче хĕл кунĕсем çуркуннене куçаççĕ. Апла пулин те выльăхсем çарана тухиччен вăхăт пайтах-ха. Мĕн кĕтетпĕр эпир хĕлĕн юлашки кунĕсенчен, мĕн çине таянса ĕçлейретпĕр? Фермăсенчи выльăхсен продуктивлăхне пăхсан тата хĕл валли янтăланă апат хисепĕпе пахалăхне шутласан, алă усмаллиех курăнмасть. Пурнăç кăларса тăратакан çĕнĕлĕхсене тивĕçлĕ йышăнса, ырă тĕслĕхсене ытларах алла илсе ыранхи куна пăхса ĕçлемелле. Çакна валли пирĕн условисем çук мар. Ăна фермăсенчи хĕл кунĕсем те çирĕплетсе параççĕ. Обществăлла выльăх-чĕрлĕх пăхакансем патĕнче пуш уйăхĕн 24-мĕшĕнче иртнĕ пĕрлехи кун пĕтĕмлетĕвĕсем çинче район администрацийĕн ял хуçалăх пайĕн тĕп специалист-эксперчĕпе Т.А. АЛЕКСЕЕВАПА чарăнса тăтăмăр.***

**– Татьяна Александровна, мĕн кăтартать-ха хыçа юлса пыракан хĕл?**

– Пĕрлешӳллĕ хуçалăхсенче халĕ иртнĕ çулхи ĕççене пĕтĕмлетессипе пухусем иртрĕç, унта кашнинчех хуçалăхсен ĕçченĕсем малашлăх чикĕсене палăртрĕç. Кунпа пĕрлех, сисмерĕмĕр те, хĕле кĕнĕренпе 5 уйăх вĕçленчĕ. Хĕлĕн çак тапхăрĕнчи пĕтĕмĕшле ĕççене тишкерме те вăхăт. Кăçалхи 5 уйăхра эпир пĕтĕмпе 3405,5 тонна сĕт (иртнĕ хĕл кунĕсемпе танлаштарсан 102 процент), 560,5 тонна аш-какай (75 процент) туса илтĕмĕр. Мăйракаллă шултра выльăхсен талăкри вăтам ӳт хушаслăхĕ 626 грамм пулни (пĕлтĕрхинчен 91 грамм ытларах), сыснасен ӳт хушаслăхĕ те иртнĕ çулхинчен чакманни пирĕн производствăна ӳстерме никĕс пурри пирки калать. Хальлĕхе вара аш-какай туса илессипе Е. Андреев яч. хис., Чкалов яч. хис., Чапаев яч. хис., Ильич яч. хис., «Восток», «Сеятель», Ленин яч. хис., «ВТМ» хуçалăхсенче çителĕксĕртерех ĕçлени курăнать.

**– Сĕт – кулленхи укçа çăл куçĕ. Ăна туса илессипе те каялла утăмсем пур-и?**

– Ĕнен сĕчĕ чĕлхи çинче тенине, ытарлă майпа пăхсан, вăл пĕтĕм отрасле пырса тивет. Сирĕн ыйтăвăр çине татăклăн хуравласа çакна калатăп: пĕтĕм харпăрлăх формиллĕ хуçалăхсенче иртнĕ пилĕк уйăхра 7111 тонна (пĕлтĕрхипе танлаштарсан 115,7 процент) сĕт суса илтĕмĕр. Вăл шутран килти хушма хуçалăхсенче 5689 тонна (123 процент), хресчен (фермер) хуçалăхĕсенче 27,3 тонна (248 процент). Ял хуçалăх производство кооперативĕсенче суса илнĕ сĕт калăпăшĕ 1395 тонна (унччenхи çулхин 91,4 проценчĕ). Çав вăхăтрах пĕр ĕне пуçне тивекен вăтам сăвăм пĕлтĕрхинчен 74 килограмм ытларах. Кунта ĕнесен кĕтĕвĕ сахалланни витĕм кӳчĕ. Сĕт сăвасси паян уйрăмах Суворов яч. хис, «Свобода», Ильич яч. хис., «Ударник», «Восток» хуçалăхсенче пысăк.

**– Кăçал вăрăма тăсăлнă хĕл сивви ăратлă выльăхпа ĕçлеме чăрмав пулмарĕ-и?**

– Шартлама сивĕ пире парăнтараймарĕ, анчах хăшпĕр хушма йывăрлăхсемсĕр те пулмарĕ. Урамри сивĕсем фермăсенчи сарайсене айккинче хăвармарĕç. Апла пулин те «Ударник» хуçалăх мăйракаллă шултра выльăхсен ăратлă тĕсĕсене 26 пуç, «Герой» тата Е. Андреев яч. хис. хуçалăхсем ăратлă сыснасене 36 пуç сутрĕç. Сутма хатĕр ăратлă выльăхсем паян «Ударник», Суворов яч. хис., «Герой» хуçалăхсенче пур.

**– Выльăх-чĕрлĕх пăхакансен паянхи кăтартăвĕ мĕнлерех-ха? Вĕсене çĕнĕ ӳсĕмсен никĕсĕ теме пулать-и?**

– Çулталăка тăрăшуллă пуçлаканăн ĕçĕ те ăнса пырать. Паян районти хуçалăхсенче кашни ĕнерен талăкра 12,5 килограмм сĕт сăваççĕ. Çакă вăл иртнĕ çулхи çак вăхăтринчен 1,4 килограмм нумайрах. Суворов яч. хис. хуçалăхра çак кăтарту 19,5 килограма çитет пулсан, Чапаев яч. хис., Е. Андреев яч. хис., «Хлебороб», Ленин яч. хис. ял хуçалăх производство кооперативĕсенче – 5,4-8,4 килограмм кăна. Хăвăрах танлаштарса пăхăр.

**А. БЕЛОВ калаçнă.**

**Хресчен, çур аки çывхарать!**

## Удобренипех акăпăр-ши?

Пуш уйăхĕ вĕçленнĕ май ума ака уйăхĕ тухрĕ. Çанталăк ăшăтса яни тата тăван тавралăха кунран кун çурхи сăн кĕрсе пыни çур аки çывхарни пирки калать. Çĕр ĕçченĕшĕн чи ответлă тапхăр. Анчах хатĕр-и-ха хресчен черетлĕ çур акине? Районти çĕр ĕçченĕ çак ответлă тапхăра епле хатĕрленет? Ку ыйту çине хуçалăхсенче çур аки валли янтăланă минераллă удобрени мĕн чухлĕ пулни те хăйне евĕр хурав парать. Камшăн хĕл ыйхи паян та вĕçленмен-ха? Çак ыйту çине паянхи сводкăран (пуш уйăхĕн 29-мĕшĕ тĕлне) ответ тупăр.

**Колонкăсенче: 1. Хуçалăхсем. 2. Минераллă удобрени кирлĕ (тоннăпа). 3. Вăл шутран хатĕрленĕ (процентпа).**

| | | | | | |
|---|---|---|---|---|---|
| Е. Андреев яч. хис. | 50 | 0 | «Ударник» | 350 | 3 |
| «Волга» | 40 | 0 | «Хлебороб» | 20 | 0 |
| «Восток» | 45 | 100 | Чапаев яч. хис. | 50 | 0 |
| «Герой» | 110 | 0 | Чкалов яч. хис. | 70 | 7 |
| Ильич яч. хис. | 110 | 42 | Мичурин яч. хис. | 20 | 0 |
| ВТМ | 30 | 0 | «ДаАн» | 50 | 38 |
| Ленин яч. хис. | 50 | 0 | Агросоюз «Картофель» | | |
| «Моргаушская» | 20 | 0 | | 10 | 30 |
| «Оринино» | 80 | 71 | АПФ «Колос» | 15 | 0 |
| «Передовик» | 100 | 0 | ООО «ВаСем» | 50 | 0 |
| «Свобода» | 250 | 48 | ООО «Акрамовское» | 20 | 10 |
| «Агро-Союз» | 50 | 0 | Ытти КФХсем | 854 | 11 |
| Суворов яч. хис. | 150 | 0 | Районĕпе | 2594 | 15,5 |

**Приглашает общественная приемная**

**С апреля 2010 года начинает свою работу общественная приемная представителя уполномоченного по правам ребенка в Чувашской Республике по Моргаушскому району Ванеркина Николая Григорьевича.**

**Прием граждан будет проходить каждый первый и третий четверг месяца с 13-00 до 15-00 часов по адресу: с. Моргауши, ул. Мира 9А, общественная приемная Всероссийской политической партии «Единая Россия». 2-14.**